***Сирěн умăрта чăвашсен малтанхи композиторěсенчен пěрин, Федор Павлович Павлован, сăн ўкерчěкě тата ун хыçне хăйěн аллипе çырнă сăмахсем. Ку сăн ўкерчěке вăл хăйěн çывăх юлташне - К. В. Иванова - парнеленě. Вěсем иккěшě те пěр вăхăтра Чěмпěрти чăваш шкулěнче ěçленě: Ф.П.Павлов пулас учительсене юрлама, К. В. Иванов ўкерме, илемлě çырма вěрентнě.***

**ЮБИЛЕЙ ТĚЛНЕ**

# Чăвашсен малтанхи композиторě

**Ф.П. Павлов чăваш халăхěпе ун культурин илемě, аслă та талантлă ывăлě. (Н.И. Иванов)**

Кăçалхи сентябрь уйăхěн 25-мěшěнче Ф. П. Павлов çуралнăранпа 120 çул пулчě. Вăл Чăваш Республикин Çěрпў районěнчи Патăрьел ялěнче çуралнă. Унăн ашшě ялти юрлама, ташлама чи ăста çынсенчен пěри пулнă, халăх юррисене кěслепе калама юратнă.

Федор ялти пуçламăш шкула пěтерсен Иккассинчи икě класлă шкулта вěреннě. 1907 çулта Чěмпěрти чăваш шкулне вěренме кěнě. Унта вăл К. В. Ивановпа, Н.В. Шупуççыннипе, П. В. Пазухинпа паллашнă, çывăх туслашнă. 300 яхăн чăваш халăх юррине çырса илнě, илемлетнě. Вăйă, улах, туй, ěç, ача-пăча юррисем хывнă. Кам кăна юрласа киленмен пуль вěсене: "Вěлле хурчě", "Чěнтěрлě кěпер", "Ким чечек"...

Чěмпěрти чăваш шкулěнче ěçленě вăхăтра 60 çынран тăракан хор йěркеленě. 1909 çулта вăл ертсе пынипе Чěмпěрти чăваш шкулěнче вěренекенсем Глинкăн "Иван Сусанин" оперине лартса панă. Сусанин арийěсене Ф. Павлов хăй юрланă. Антонида арийěсене - Капитолина Селиванова. Çак ěç çинчен хулара нумайччен ырăпа асăннă, "Симбирянин" хаçат пысăк хак панă. Тěлěнмелле! "Иван Сусанин" оперăна лартма сцена çинчи декорацие К. В. Иванов ўкернě. Хăй вăхăтěнче К. Ивановпа Ф. Павлов "Нарспи" поэма содержанийě тăрăх опера та çырма ěмěтленнě.

Музыка енěпе тарăнрах пěлў илес тесе, Ф. Павлов 1913-1916 çулсенче Чěмпěрти тěн семинарийěнче вěреннě. Ун хыççăн вăл тěрлě ěçре ěçленě: ялти шкулсенче, çут ěç пайěнче, музыка шкулěнче, халăх судийěнче... Çав вăхăтрах Хусанти археологи институтěнче вěреннě, Шупашкарта - музыка техникумě уçас тěлěшпе нумай тăрăшнă. С.Максимовпа тата В. Воробьевпа пěрле Чăваш хорě йěркеленě.

Ф. Павлов пултаруллă композитор çеç мар, талантлă дирижер, музыка педагогěпе тěпчевçи те. 1923 çулта вăл ертсе пыракан хор Мускавра пулнă, тěрлě çěрте концертсем кăтартнă, чăваш халăх юррине тěнче умне кăларнă. Музыка культурине çěклес тесе мěн






чухлě статья çырман-ши тата! Паллă статйисем: "Чăваш кěсли", "Чарăннă сасă", "Çырмари юрă", "Чăваш музыки"... Чăвашсен пěрремěш "Сăрнайпа палнай" симфонине те вăлах çырнă.

Музыкăра хастар ěçленě хушăрах Ф. П. Павлов илемлě литературăра та пысăк пултарулăх кăтартнă. Вăл сăвăсем ("Тет хитре хěр", "Савнă хěр"...), калавсемпе шўтсем ("Ишекелле", "Йытăпа кушак"...), драмăсем çырнă. 1919 çулта "Судра" комеди, 1922 çулта "Ялта" драма пичетленсе тухнă. Вěсенче те вăл геройсен ( сăнарсен) шухăшěпе кăмăлне уçса пама юрă, ташă, такмаксем кěртсе хăварнă. Акă "Ялта" драмăн тěп геройě Елюк хăйěн пепкине "Нянине-тунине" сăпка юррипе йăпатать. Вăрçă хирне тухса кайма пуçтарăннă çамрăксем хурлăхлă юрă юрлаççě:

**Ман çул урлă каçнă чух**
**Яштак хурăн хуçăлчě,**
**Симěс çулçи тăкăнчě.**
**Тăвансенчен уйрăлнă чух**
**Яштак пěвěм авăнчě,**
**Çемçе кăмăл хуçăлчě.**

Драмăрах мěн чухлě вăйă, туй юррисем... Ахальтен мар çак пьесăсем хăйсен пěлтерěшне паян та çухатман.

Музыка ěçне тата лайăхрах пěлсе çитес тесе, 1930 çулта Ф.Павлов Ленинградри (Петербург) Н. А. Римский-Корсаков ячěллě патшалăх консерваторинче вěренме тытăнать. Туберкулезпа йывăр чирленěскер 1931 çулта Сочи хулинчи санаторие сипленме каять, çавăнтах вилет. Ăна Сочирех пытарнă.

Ěмěрě кěске килнě пулин те, Ф. Павлов чăваш культуринче анлă та тарăн йěр хăварнă. Ун юррисем, сăввисем, шўчěсем, пьесисем ěмěр-ěмěрех халăх ăсěнче упранěç.

***Римма ПЕТРОВА.***

**ЮСТИЦИ ХЫПАРĚСЕМ**